Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕ

Сарăлсах пырать Даниловăн хуçалăхĕ

Ялти çын выльăх-чĕрлĕх усрать, çĕр çинче ўркенмесĕр ĕçлет пулсан, выçă лармасть. Килти хушма хуçалăхра туса илнĕ продукципех пурнăçа сыпăнтарса пыма хăнăхнă. Анчах та эсир манпа килĕшетĕр пулĕ тесе шутлатăп, Муркаш районĕнчи Чурикассинче пурăнакан С.В. Данилов пек килте 100 сысна усракансем пирĕн хушăра кашни утăмрах тĕл пулмаççĕ-ха. Çитменнине çамрăксем.

– 4 çул каялла сысна амисем тытас шухăш кĕчĕ, паян вĕсем 12 çитрĕç. Çурисемпе, чăннипех те, пĕр вунă теçетке пулать ĕнтĕ, – тет Сергей Валерьевич.

Пулăшакана, чăннипех те, Турă та пулăшать иккен. Шăпах вăл вăхăтра «АПК аталантарасси» наци проекчĕпе килĕшўллĕн килти хушма хуçалăха аталантарма патшалăх çăмăллатнă кредитсем пама пуçларĕ. Нумай шухăшласа тăмарĕ пурнăçне выльăх-чĕрлĕх отраслĕпе çыхăнтарма тĕв тунă çамрăк – 87 пин тенкĕлĕх кредит илчĕ. Çав укçапа сысна сарайне туса лартрĕ. Ĕç кайнине кура тепрехинче «Россельхозбанкран» илчĕ кредит. Унпа килти çав çĕнĕ сарай сумнех теприне туса лартрĕ. Виççĕмĕш хут патшалăх пулăшăвне каллех Перекет банкĕнчен илчĕ. Унпа вара çав икĕ сарайне тĕплĕн хăйне кăмăла кайнă пек туса пĕтерчĕ.

– Шикленмерĕр те-и çинеçине кредит илме? Парăм тўлессипе хăратать-çке?

– Пĕрре те хăраса тăман. Эпĕ хам ума çирĕп тĕллев лартрăм: суйланă çулпа – малалла кăна, – кулать вăл.

Ара, ахальтен вĕренмен пулĕ ĕнтĕ ветврача е зоотехника, тейĕ вулакан. Эпĕ те малтан çапла шутланăччĕ. Апла мар иккен. Выльăхсемпе ĕçлеме ятарлă професси илмесĕрех çак ĕçе кўлĕннĕ.

Выльăхсене юратасси ман вăл юнрах пулĕ, – кулать темиçе кун каялла 35 çул тултарнă Сергей Валерьевич. – Кукампа çитĕнтĕм. Вăл ферма заведующийĕнче ĕçлетчĕ. Анне вара – зоотехник. Ача чухне килте шур шăширен пуçласа лаша таранах усраттăмăр.

Пĕчĕк Валера килти арланне те, тинĕс сыснине те, кроликсене те (вĕсем 200-тен те иртетчĕç) юратсах пăхатчĕ. Çамрăк юннатсен грамоти паян та упранать-ха унăн килте. Пĕр çулхине республикăри конкурсран 3-мĕш вырăнпа таврăннăччĕ. Даниловсен «петнамка» чĕпписем ун чухне курава килнисене тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтернĕччĕ.

Шкул хыççăн тăван Калайкасси шкулĕнчех ĕçлеме юлчĕ. Çур ставкăпа пахчаçă тивĕçĕсене пурнăçлатчĕ. Шкулăн кроликсем нумайччĕ. Вĕсене те юратсах çитĕнтеретчĕ. Çав хушăрах «Гигант» хуçалăхра та вăй хуратчĕ. Каллех выльăхсемпе, ферма таврашĕнче. Каярахпа 2 çул Шупашкарта «Атăлçи казачествинче» командир пулчĕ. Резерва куçнă хыççăн ачалăхра çуралнă ĕмĕтсем патне каялла таврăнчĕ. Шăпах çавăн чухне сысна ĕрчетес шухăш кĕрсе çирĕпленчĕ те ĕнтĕ унра.

Эпир унпа Кĕрекаçри сысна ферминче тĕл пултăмăр.

– Мĕнле ĕлкĕретĕр вара килти сыснасене те, кунтисене те пăхма, – тĕлĕннине пытармарăм эпĕ.

– Килте пĕлтĕр 250 пусчĕ. Кăçал ун чухлех мар. Ĕçе кайиччен, ĕçрен килсен - çавăн пекех ĕлкĕретĕп, – кăмăллăн каласать вăл. – Кунта вара ферма заведующийĕнче, инженер вырăнĕнче эпĕ. Хуçалăх ĕçченĕсемпе пурĕ пиллĕкĕн пĕтĕм кунти ĕçе туса пыратпăр. Кĕçех ак вĕсемпе пуху ирттерме палăртнă. Ĕç укçине ўстерес шухăш пур вĕсенне.

«ВТМ» хуçалăхпа килĕшў туса тепĕр 200 сысна кунта тытать вăл. Пĕтĕмпе икĕ сарайне вырнаçтарнă вĕсене. Тепĕр икĕ сарайĕ – «ВТМăн». Хуçалăхăн 57 сысни те çак фермăрах.

– Даниловăн килти хушма хуçалăхĕ сарăлсах пырать. Кăçал вăл «ГАЗ-53» автомашина илчĕ. Алă айĕнче «Нива» автомашина пурри вăл е ку ыйтусемпе çўреме меллех çав. Халĕ Сергей Валерьевич ДТ-75 трактор илес ĕмĕтпе пурăнать. Вомпăкассинчи В.Гаврилов фермерпа кун пирки каласса татăлнă ĕнтĕ вĕсем.

Выльăхсем валли комбикормне те вырăнтах тăваççĕ. Çавăн пекех вĕри çĕр улми, Çĕрпўрен шăмă çăнăхне кўрсе килсе çитереççĕ. Юлташĕсем пулă юлашкийĕпе тивĕçтерсех тăраççĕ.

Сергей Валерьевич, хăй каланă тăрăх, кăçал 900 килограмм сысна ашне сутнă та ĕнтĕ. Хăех сутать вăл ашне те. Мăн Сĕнтĕр пасарĕнче, Шупашкарти пасарта вара – яланхи клиентсем.

Выльăхсен сывлăхне вара участокри ветврач В.Г. Лебедева пăхса тăрать.

– Пултаруллах вара Сергей Валерьевич хăй суйланă ĕçре, – каласа хутшăнать Валентина Гурьевна.

Пултаруллă пулмасăр, унсăрăн тепĕр татăклă утăма тунă пулĕччĕ-и вара? Кăçалхи январĕн 20-мĕшĕнче хамăр районти Хорнуйĕнчи сысна фермине те арендăна илчĕ Данилов. Халĕ унта хĕрсех юсав ĕçĕсем пыраççĕ.

– Унта ăратлă сыснасем ĕрчетесшĕн, – хăй ĕмĕтне уçса парать паян-ыран фермер пулас ĕмĕтлĕ арсын.

Çапла майпа тепĕр 2,5 млн. кредит илес шухăш тытнă вăл.

– Çав кредита илетĕп-тĕк, Хорнуйĕнчи сысна ферми пĕтĕмпех йĕркеллĕн ĕçлесе каймалла, – тет вăл.

Ку çеç те мар. Хăйĕн пултарулăхне вăл ўсен-тăран отраслĕнче те тĕрĕслесе пăхма хирĕç мар. Ара килти тислĕке тележкăпа кăларса хурса çуркунне ахаль кăларать-и хăйĕн пай çĕрĕсем çине. Пĕтĕмпе 4 га çĕр унăн. Унта вара Сергей Валерьевич çĕр улми çитĕнтерес шухăшпа пурăнать. Вĕтти сыснасене валли юлать, шултрине сутса вара тепĕр çĕнĕ ĕмĕте пурнăçлама май парĕ.

– Ял хуçалăхĕ – картла выляна пекех: паян эс выляса илетĕн, ыран лару-тăру çав ăнăçăва карт! çеç туртса илме пултарать, – тет Сергей Валерьевич.

Хаксем кашни çул тĕрлĕрен выляççĕ вĕт. Апла пулин те, нимрен шикленмесĕр, хăй суйланă çулпа, хăй лартнă тĕллев патне çирĕппĕн утăм хыççăн утăм тăвать С.В. Данилов.

– Каялла чакас шухăш та çук. Тулĕк –малалла, сарăлсах пымалла ман ĕçĕн, – тет вăл.

Сергей Валерьевич пек çынсем кашни ялтах татах та ытларах пулас пулсан, ял хуçалăхĕ паян тўсекен йывăрлăхран тухас шанчăк пур.

Хушса калани. Материала хатĕрленĕ вăхăтра С.В. Данилов фермер пулса тăни çинчен калакан документсене алла илчĕ.

Л. ПАВЛОВА.

Сăн ўкерчĕкре: С.В. ДАНИЛОВ (сулахайра) В.Г. Лебедева ветврачпа тата В.И. Кузьмин рабочипе.

Çул çитмен çамрăксемпе вĕсен прависене хўтĕлекен комисси ларăвĕнчен

Вĕсен йăнăшĕсене тăвас марччĕ

Районти çул çитмен çамрăксемпе вĕсен прависене хўтĕлекен комисси ларăвĕнчен нихăçан та чуна пăлхантармасăр тухма çук. Хальхинче те 20 яхăн административлă ĕç пăхса тухрĕç. Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи хĕрарăма, ав, амăшĕн тивĕçĕсене пурнăçламанран çак правасеннчен хăтарнă. Анчах та хальлĕхе ачишĕн алимент тўлеме пуçламан-ха.

– Халĕ ял хуçалăх предприятине ĕçе вырнаçрăм, тўлеме пуçлатăп, – шантарать вăл.

Телее, ку хĕрарăмăн ачине урăх çемье усрама илнĕ ĕнтĕ. Тăван амăшĕ парайман юратăва урăх çынсенче тупрĕ вăл.

Ашшĕ-амăшĕнченех килет çав ача шăпи мĕнле пуласси. Паян пĕрисем ачисене укçа тўлесе вăрентме тăрăшаççĕ. Ларура пăхса тухнă тĕслĕхре вара, малтанхи пек каласан, техникумра бюджетлă вырăнта вĕренекен ача январьтен пуçласа занятисене çўреме пăрахнă. Мускава кайса 10 пин тенкĕ ĕçлесе илнĕ çав хушăра. Мĕн тума çитĕ çав укçа? Пурнăçа хуçмалли пĕр утăма тума та ĕлкĕрчĕ вăл.

– Малтан зачетсем парайман. Унтан вара документсене пуçтарса килтĕмĕр, – ачине хўтĕлесе каласать ашшĕ.

Маларах ашшĕ-амăшĕ хытăрах каланă пулсан, çак утăма тунă пулĕччĕ-ши çак çамрăк? Комисси ашшĕне штраф панипе пĕрлех студента техникума каялла вĕренме каймаллине палăртрĕ. РФ вĕрентў çинчен калакан саккунпа килĕшўллĕн çав вĕрентў учрежденийĕн вĕсене документсене парса ямалла пулман. Вĕрентў министерствине, вĕрентў заведенине çырупа тухма йышăнчĕç.

Ашшĕ вăхăтра хытарманнипех пулĕ тепĕр тĕслĕхре те ача хăйĕн пуласлăхне хуçас çул çине тăнă. Пĕр хутчен кăна пăхса тухман ăна кунта. Амăшĕ çине пăхсан, чун ыратать.

– Мĕн тумаллине те пĕлместĕп. Килтен шкула каятăп тесе тухса каять те, кăнтăрла иртсен ытти ачасем шкултан таврăннă вăхăтра киле таврăнать. Ашшĕшĕн пулсан, ик айкки те–тăвайкки. Кунĕн-çĕрĕн ўсĕр, килтен хăваласа кăларса ярать. Укçа çитмест. Аптранипе икĕ ĕне усрама пуçларăм, пĕччен ĕçлени ним тума та çитмест, – макăрать хĕрарăм.

Иртнĕ ларура ачи йĕркеленме сăмах панăччĕ вĕт-ха. 9-мĕш класра вĕренет: амăшĕн куççульне ăнланмалла пек.

– Тўрленетĕп, – тесе куççулĕпех сăмах пачĕ ача. Унăн çак сăмахĕсене тем пекех пурнăçпа пĕр килтерес килет. Унсăрăн çитес вăхăтра унăн пурнăçĕ урăх еннелле улшăнма пултарать: хытă режимпа вĕрентекен аякри шкула ямалла тумалла пулать, палăртрĕç ларура. Тăван килтен хакли çуккине унран аякра чухне мар, халех ăнланинччĕ çак ача.

Хамăр ачасем кампа юлташлă пулнине пĕлетпĕр-и тата? Кăмăл çирĕплĕхĕ çитменнипе, тусĕсем хыççăн кайнипе йăнăш çул çине тăнă тĕслĕхсем те сахал мар вĕт.

– Мана çакăнта кĕтсе тăр, – терĕ те, хăй таçта кайса килчĕ, ăна пĕлместĕп, – тет шкулта хăйне лайăх тытакан, лайăх вĕренекен ачах. Тусĕ вара çав хушăра хуçалăх правленине кĕрсе тухнă. Тепри ав пĕр класра вĕренекенĕн кĕсье телефонне вăрланă. Каялла парас тесен, юлташĕ (юлташсем-ши кун пеккисем?) чарнă, сутса пама шантарнă.

Сăмах май, кĕсье телефонне кăларса илнĕ тĕслĕхсем час-часах тĕл пуласççĕ. Хăйсен пулсан та, çыннăн илĕртет пулмалла ачасене.

Шел пулин те, çул çитмен çамрăксем эрех-сăра ĕçсе обществăлла вырăнсенче хăйсене килĕшўсĕр тытнă тĕслĕхсем тăтăшах тĕл пулаççĕ. Çакăн пек административлă ĕçсене кашни ларурах пăхса тухаççĕ.

– Килте пулăшать. Эрех-сăра ĕçни пĕрре те пулман.

– Урама тухса кайсан, хулара темле çўреççĕ – пĕлместпĕр-çке.

Комисси ларăвĕнче ашшĕ-амăшĕсем калакан çав сăмахсем тепĕр хут пире, ашшĕ-амăшĕсене, ачасене воспитани парассинчи кашни саманта тишкерме хистемеççĕ-ши? Çакăн сăлтавĕ кашни çемьере тĕрлĕрен пулĕ. Çакăнти тĕслĕхсенчен кирлĕ пĕтĕмлетў туни хамăршăнах лайăх мар-ши? Çын йăнăшĕсенчен вĕренсе, хамăрăн тăвас марччĕ вĕсене.

Л. ПЕТРОВА.

Наркотиксемпе усă курассине хирĕç кĕрешекен комисси ларăвĕнчен

Çăлăнăça хамăртах шырамалла пуль...

Çак кунсенче районти наркотиксемпе усă курассине хирĕç кĕрешекен комисси ларăвĕ пулчĕ. Ăна район пуçлăхĕ, асăннă комисси председателĕ Ю.А. Иванов ертсе пычĕ. Ларура çак комиссин иртнĕ çулхи ĕçне, Шетмĕпуçпе Муркаш ял тăрăхĕсенче психоактивлă веществосемпе усă курассине хирĕç епле кĕрешнине, «2005-2009 çулсенче Муркаш районĕнче наркотик хатĕрĕсемпе усă курассине тата вĕсене саккуна пăсса сутассине хирĕç кĕрешмелли комплекслă мерăсем» тĕллевлĕ программа мĕнле пурнăçланса пынине тишкерчĕç.

Ку авăра лекес марччĕ

– Пирĕн ял тăрăхĕнче наркотиксемпе усă кураксем çук, – терĕ Шетмĕпуç ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.П. Александров. Муркаш ял тăрăхĕнче те хальхи вăхăтра ку сиенлĕ йăлапа аппаланакансене курман. Пĕр енчен лăплантарать çакă. Пĕр енчен çав.

Тепĕр енчен, районта кун пек пĕр тĕслĕх те çук теме пулмасть. Районти тĕп больницăри наркологи пўлĕмĕнче паянхи куна 2 наркоман учетра тăрать, наркотиксемпе усă кураксем тата 4-ăн. Пурте вĕсем 30 çула çитеймен е кăшт аслăрах çамрăксем. Районти шалти ĕçсен пайĕнче ку енĕпе учетра тăракансен йышĕ пысăкрах. Йĕрке хуралçисем вĕсене куçран вĕçертмеççĕ. Çакă наркотиксемпе аппаланакансем хăйсен ушкăнне ытти çамрăксене туртса кĕрсе каясран сыхлать.

Çав хушăрах пирĕн юлашки 5 çул хушшинче Раççей Федерацийĕнче наркотиксемпе усă кураксен йышĕ 10 хут ытла ўснине те асран кăларма юрамасть. Кун пек хăвăртлăхпа тарăнланать пулсан çак тĕпсĕр авăр, пыра-киле хăй çаврăмне такама та туртса кĕрсе каймa пултарнине манмала мар. Çак хăрушă инкек килсе ан çаптăр тесе, хамăртан килнине йăлт тумалла.

Кунта манăн район пуçлăхĕн Ю.А. Ивановăн сăмахĕсене илсе кăтартас килет.

–Çамрăк ăрава упрамалла пирĕн сиенлĕ йăласенчен, – терĕ вăл комисси ларăвĕнче. –Çитĕнсен, пурнăçа ăнланакан пулсан, çак юхăмах кĕрекенсем çук.

Ку енĕпе районти вĕрентў, культура, медицина учрежденийĕсем хăйсенчен килнине йăлтах тăваççĕ: наркотик сиенĕ çинчен каласа паракан тĕл пулусем, çавра сĕтел хушшинчи каласусем, тренингсем, ытти мероприятисем. Çапах та, район пуçлăхĕ палăртнă пек, ял тăрăхĕсенче ку темăпа информаци кунĕсем ирттерни вырăнлă пулмалла. Информаци ушкăнĕсене вĕрентў, культура, медицина ĕçченĕсенчен йĕркелемелле. Тата, Юрий Александрович калашле, ку тĕлĕшпе саккуна хытарни те кирлех. Наркотиксемпе аппаланакансене ирĕксĕрех сипленмелле тусан, усси пулмаллах.

Районти шалти ĕçсен пайĕн кăтартăвĕсем тăрăх, районта «йывăр» наркотиксемех тĕл пулман. Анчах та мăкăнь тунисене туртса илнĕ тĕслĕхсем пулнă. Çавăнпа та хаçат вулакансене асăрхануллă пулма ыйтас килет, йăрансем çинче мăкăньсем шăтса тухман-и, кам та пулин ятарласа сапса хăварман-и – асăрхăр çакна. Мăкăнь ўстернĕшĕн саккун тăрăх уголовнăй майпа явап тыттараççĕ.

Черккери эрех – чĕрери куççуль

Наркомани е урăх проблема çинчен калаçатпăр-и – кунта пирĕн каллех çемье пĕлтерĕшĕ çинчен манса каймалла мар. Кулленхи ĕçсен юхăмĕнче, кулленхи татса парайман ытти ыйтусем хушшинче хамăр ачасене тимлĕхсĕр хăвармастпăр-и? Вĕсем чун ăшшине урамра шырамаççĕ-и? Канăç паман ыйтусем нумай кунта. Тепĕр чух воспитани ĕçĕнче специалист сĕнĕвĕ те ытлашши пулмĕ. Çавăнпа та сире мĕнле те пулин ыйту хумхантарать пулсан, эсир çирĕппĕнех çак шанăç телефонĕсемпе шăнкăравлама пултаратăр:

62-3-97 – ку номерпе сире районти тĕп больницăн психотерапевчĕ, наркологĕ кирлĕ сĕнўсем парĕ.

62-8-95 – ку номерпе вара эсир районти диагностикăпа консультаци центрĕн психологĕ патне лекĕр.

Ашшĕ-амăшне хумхантаракан проблемăсем паян татах та пур. Çул çитмен çамрăксемпе вĕсен прависене хўтĕлекен комисси ларăвĕнче те пĕрре кăна мар сăра ĕçнĕ ачасемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕсене пăхса тухнă:

– Пĕр кĕленче сăра ĕçрĕм, – пытармарĕ çул çитмен çамрăк.

Суту-илў точкисенче сутуçăсем параççĕ вĕт çул çитмен çамрăксене сăра. Эрех тыттарса яракансем те çук тесех çирĕплетме йывăртарах пулĕ. Тен РФ Патшалăх Думинче тĕрĕс йышăну туса (халĕ унта шăпах çул çитмен çамрăксене спирт пур шĕвек сутакансене хытармалли сĕнўсене тишкереççĕ) инкекĕн пĕр çулне пўлсе лартĕç?

Эрех ăшне путсах пыратпăр пулмалла.

– Мĕн тĕрлĕ ĕç туса ирттерсен те, эффективлăхĕ курăнсах каймасть, – çапла хак пачĕ ку тĕлĕшри ларутăрава район пуçлăхĕ.

Районти тĕп больницăри нарколог пўлĕмĕнче 558 алкоголик учетра тăрать, вĕсенчен 120-шĕ – хĕрарăмсем. Кусемсĕр пуçне эрехпе иртĕхекенсем тепĕр 435-ĕн учетра тăраççĕ. Вĕсенчен 27-шĕ –хĕрарăмсем, 6-шĕ - çул çитмен çамрăксем. Çаксем вĕсем вăл е ку тĕслĕхе пула учета илнисем. Учета илменнисем тата миçен? Кашни ялтах пур вĕсем. Кашни касрах тесен те пысăк йăнăшах пулмĕ. Ашшĕсем ĕçеççĕ, амăшĕсем ачисене эрех черккипе улăштараççĕ. Мĕн патне пырса тухăпăр каплах пулсан?

Камран пулăшу ыйтас? Ăçта çăлăнăç шырас: шкулта, клубра, обществăлла организацисенче? Паян кашни ялтах эрех сутакансем пур. Малтанхи çулсемпе танлаштарсан, вĕсен хисепĕ чакни палăрать. Шетмĕпуç ял тăрăхĕнче те вĕсем сахаллансах юлчĕç.

– Ялти пухусенче намăслантаратпăр, куçранах калатпăр, – çакă витĕм кўчех, – тет Николай Поликарпович.

Сывă пурнăç йĕркишĕн культура учрежденийĕсем те тăрăшаççĕ кунта.

–Шетмĕпуç клуб заведующийĕ хăй те ĕçмест. Çамрăксенчен те çакнах ыйтать. Мĕн тетĕр? Ўсĕрле клуба килекенсем курăнми пулчĕç, Тивĕш клубĕнче ĕçлекенсем те çак ырă пуçарăва малалла тăсрĕç, – чăннипех те ĕçлекенсем çинчен итлеме те кăмăллă.

Ăнланасчĕ Çурлатринче килте эрех сутакансен те хăйсем çынсене куççулĕпе инкеке укçалла сутнине. Ытти ялсенчи çын куççулĕ çинче укçа тăвакансен те. Кашни ялти ĕçекен ашшĕ-амăшĕсен те çав пăтранчăк шывпа хăйсем кунçул панă тăван ачисен пурнăç çулне хупласа пынине ăнланса илесчĕ.

Çăлăнăça никамра та мар, хамăртах шырамалла пирĕн.

Л. ТУКТИНА.